„Канаш“ хаҫат ҫумĕнҫе тухаҫ.

# КАПКĂН

15-мĕш №

августшăн, 1927 ҫ. 3-мĕш ҫул тухаҫ.

## Ирĕксĕрех тăрăн.



**АРĂМЕ.**—Мĕн есĕ пайан ирех ҫилĕллĕ. Вырăну ҫинҫен сулахай урупа тăтăни мĕн?

**УПĂШКИ.**—Копперативера икĕ пушмака та сулахай урана тăхăнмаллисене тыттарнă та, ирĕксĕрех сулахай урапа тăрăн.

# Çăварлăхламалла.

Ĕçкĕ тăваӗ вăл: нумайĕшĕ ĕçкĕ пирки пуçне çиеççĕ. Мур кур йалсовет претçетаттĕлĕ урă, ĕçмен вăхăтра çын йевĕрлех çŷрет, çăпатине те кутăн сырмасӗ вăл, пуçăнах сыраӗ, калаçма та йĕркеллех калаçаӗ, ĕçлеме те пултараӗ пулмалла, çавăнпа ăна, йĕркеллĕ çын-ха вăл, çыру та вĕреннĕ, тесе Муркар халăхĕ претçетаттĕл вырăнне суйласа лартнă. Тумалли ĕçĕсене майĕ майĕпе ĕçлесе пыраӗ вăл.

— Пайан çавна тумаллаха,—канашлаӗ вăл ђленĕсемпе.

— Тăвас-тăвас кирлĕ пулсан, тавăрса калаççĕ ђленĕсем,—пире халăх ĕçлеме суйланă.

Йе тата Хăмăшри (Нурăс в.) йалсовет çыруçине илер, вăл та хăйне кура халăх ĕçне ĕçлесе тăраӗ. Ирхине йалсоветне пыраӗ те, папкинђен хуђĕсене кăларса çырма тытăнаӗ. Ăна та халăх, унăн ђакăр куçĕсене хĕрĕнсе мар, йалсовет ĕçне ĕçленĕшĕн шалу парса тăраӗ. Шалăвĕ питех пысăк мар та ĕнтĕ, ĕçĕ те çав тери анђах.

Прачниксенђе халăх аптăраӗ вара вĕсемпеле. «Ђăхăмçă» лашан урисем хушшине тилкепе кĕрсен урапу çĕмĕрессе кĕтсех тăр, йе тата ун пек лаша çул варрине ђарăнаӗ те, тăлхăрса каллĕ-маллĕ пăхкаласа кăмăлĕ килиђђен пĕр вырăнта тапăртатса тăраӗ--ни малалла, ни кайалла. Хуӗ сан тем пек васкамалла ĕçŷ пулсан та, вăл «майа килиђђен» кĕтсе тăрас пулаӗ. Хуçи тыткалама пĕлсен ђас-ђасах ун пек «ђăхăмçă» лаша та йĕркене тухаӗ, кутăнланма пăрахаӗ. Тыткалама пĕлес пулаӗ...

Те Муркар йалĕпе Хăмăш йалĕ тыткалама пĕлеймеççĕ, те урăх сăлтавпа вĕсен йалсоветĕсен вăхăђĕ-вăхăђĕпе «ђăхăмçă» лашасем пек «тĕнђене култарса" илеççĕ. Ахађ ђух вăл ку палăрмасӗ те, праçниксенђе ĕç пăсалаӗ. Праçникĕсем те нумай тата: Раштавĕ, Мункунĕ, Çимĕкĕ... мур ђул праçник. Хуласенђе ĕçлекенсем вăл «праçниксене» питех йуратса каймаççĕ те, йалсенђе ĕлĕкхи йăлапа (хăçан пĕтсе ларĕ çав ĕлĕкхи йăла) вăл «праçниксене» пур çĕрте те пулмасан та, ђылай çĕрте тем пек кĕтсе, хатĕрленсе тăраççĕ. Вăл праçниксене мĕн тума пит кĕтнине такам та пĕлет: унта ĕçкĕ пулаӗ. Ĕлĕкхи йăласене тĕплĕрех шухăшласа пăхсан, тĕлĕнсе кайан ђисти. Праçникре савăнса канас вырăнне «ĕçкĕ пулаӗ», ĕçес килсен, сăрана ахађ ђух та, кăштăн-кăштăн, кирлĕ таран ĕçме пулаӗ пуђ.

Праçник çитет, сăра-ерек хатĕрлес, тесе шăлне хăйраӗ малтанах ĕçке йуратакан çын..

Сăрине хатĕрлет, çуттине тупаӗ. «Праçникĕ» çитсен ĕмĕр курман пек ĕçет те (йепле хырăмĕ çурăлмасӗ)... йулашки ĕçне çухатаӗ.

— Ĕç, Мункун çулталăкне пĕрре çеç пулаӗ, тесе йанклаттараӗ вăл куркине.

— Раштавĕ те, Çимĕкĕ те çулталăкне пĕрре çеç пулаӗ вара унăн. Мĕн пурне пĕрле пухса пурĕ икĕ теçеткерен те иртет.

Кунта епĕ ĕçкĕ çынна мĕнле сийен кŷни çинђен калаçас теместĕп, ун çинђен тухтăрсем аван калаççĕ. Анђах йепле пулсан та, хырăм кŷпĕниђђен куç ŷпĕниђђен ĕçнин усси çук пулĕ, тетĕп.

Мĕн «тетĕп» тесе тăмалла унта, ăкă примерсем. Пĕр «пысăк» праçникре Хăмăш йалсовет çыруçи «ĕлĕкхи йăлапа» ĕçсе ŷссĕрĕлет. Ун аллинђе хађ папккă та, руђкă та нимĕн те çук, таçта вĕсем, астумасӗ вăл («праçникре» вăл шухăш-им?)

Урампа иртсе пынă ђух «сывлăшне çавăрма» пĕр çурт патне пырса тайăнаӗ. Урам тăрăх пăхкалаӗ те, никам килни курăнмасӗ. Пирĕн çыруçă никампа хирĕçме аптăраӗ. Ĕçсен хирĕçмесен йепле пулаӗ-ха вăл? Ĕлĕкхи йăлана пăсма йураӗи.

Куçне ђарса пăхаӗ те, кам çурђĕ умĕнђе тănине ăнласа илет. Вăл пырса ђарăвнă çурт, тăлăх арăм çурђĕ пулнă. Сулланкаласа кĕрсе кайаӗ вăл çурта. Кĕрсенех тăлăх арăмпа хирĕçме тытăнаӗ.

— Сан-н-н... кă-маку усал--хăралтатаӗ вăл--ишмелле ăна...

Арăмĕ нађар пулнă, тепĕри пулсан кăтартĕђђĕ ăна кăмакасем.

Тăлăх арăмăн пĕђĕк ађисем çак тискер кайăкран хăраса, пĕр кĕтессе

амăш патне, ҫăх ҫĕпписем амăш ҫунаҫĕ айне кĕрсе ларнă пек, ун йĕри тавра пуҫтарăнса лараççĕ. Тăлăх арăм ăна тухма хушаť.

— Ман кăмака ыттисеннинҫен пĕрте кайа марçке, ма хирĕçенха есĕ манпа, сасă параť вăл кĕтесрен.—Ŭсĕр есĕ килне кай...

— Молҫаť! Иа... йа парттейнăй, кăшкăраť вăл урине тапса.

Тăлăх арăмăн аҫисем хăранипе йĕме тытăнаççĕ, вăл вĕсене çапкаласа урама кăларса йараť, вĕсен хыççăн амăшĕ те пŭртрен тухса тараť.

Ытти пулсан малалла ним тума та аптăрĕҫҫĕ ĕнтĕ, вăл çыннăн намăс çук та ĕнтĕ, çапах та, вулакан, вăл кун хыççăн тухса кайнă тейĕ. Çук, пирĕн çыруçă кайма шухăхламасť-ха. Пŭрте пĕҫҫен йулсан, ŭсĕр куçĕсене, лаша куçĕсем пек çавăркаласа илет те, ним тума аптăраса кăмака çине улăхса лараť. Вăл та пулҫĕ. Малалла мĕн тăвас?

Хăй сăмахне çийеле кăларас тесе-и ĕнтĕ, хăй вăйне сăнама, вăл урисене çтена çумне тĕрелет те, пĕтĕм вăйĕпе, аллисемпе, пăхăр çамкипе тĕрелесе кăмаки тăррине ишсе антараť, (вăт упа ăçта) çав вăхăтрах хăй те «кĕрĕслетсе» персе анаť.

Тăлăх арăм çынсене ҫĕнсе килсен вĕсем ăча ҫарма тытăнаççĕ.

— Ан çыхланăр мана, епĕ ăслă çын, тесе ахăрашаť.

Пĕри çак «ăслă çынна» çавăтса тухма тытăнаť те, вăл ăна çĕçĕпе ҫиксе кĕпине шăтараť.... Нушаланкаласа вара ăна ик-виç çын аран-аран илсе тухса кайаççĕ.

Муркар йалсовет претçетаттĕлĕ те çак «ăслă çынтан» нумай кайа йулман. Праçниксенҫе вăл та «ҫахăмлаť». Нумай пулмасť (хăш праçникре пулнине йалкор кăтартман. Й. Ç.) нумай пулмасť ĕçсе ŭсĕрелет те, никама хĕнеме аптăраса, алли кĕçĕтнипе хăйĕн вăтă ашшĕне хĕнеме пикенеť. Ашшĕ ăна ним сăмах та каламан. Мĕн калатăр вăл çав ухмаха, нимĕн те каламан та вăл хирĕçме тупаť.

— Ват супнăскер, çухал ман куçран, —çыпăçаť вăл ашшĕне.

—Аçта кайас ман ывăлăм, ма кашкăрашатăн,—ҫараť ăна ăшшĕ.

— А-а-а, ес манпа калаçма-и, манпа тавлашма-и-и-и? Çапса йараť ватăскере. Кайран урса кайса ăнтан йариҫҫен хĕнет.

Вăл вăхăтра урампа йалсовет ҫленĕ, 60 çулхискер, иртсе пыраť. Вăл лашине кĕтĕве йама кайнă пулнă, унтан тавранаť, аллинҫе йĕвен. Ахăрашнине илтсен вăл, унта ҫарма тесе ҫупса пыраť.

— Мĕн хăтланатăр есĕр, айвансем, ҫарăнăр,—пырса тăраť вăл иккĕшин хушшине. Ҫарнăшăн ăна та сăптăрса йараť, ку йĕвенпе параť, кайран аран тарса хăтăлаť... Ҫарăн çынна пĕр урса кайсан.

Йĕвенпе çеç ҫарма çук ун пек çынсене ç ă в а р ă х л а с пулаť, вăт мĕскер кĕтеççĕ вĕсем. ИАЛАВИН.

## Ыт ахалтен анҫах.



— Ку кĕрешŭ мана пŭрократисăмпа кĕрешнине аса илтерет.

— Мĕнле? Ара, çĕнтерни палăрмасť.

# Улма праçник кунĕ.



**Карђăк**: Ах, ку шăнана! Çылăха пĕлмест. Пуп молепĕн тумасăрах улмана çийесшĕн.

**Шăни:** Санран ăслăрах çав епĕ! Пупсем хăйсем такçанах çинĕ, сана, шăлсăрскере, çеç çиме хушмаççĕ.

# Шăнасем йурлаççĕ.

(Ни тĕлĕкре мар, ни кĕретĕн).

«Пурнăç» йатлă терĕç театтăрне. Кайрăмăр. Санавĕс уçăлђĕ.

———

— Ни-и... никаса йађĕ ўпри. Тискăнтпах калаť.

— Нĕр-нĕр-нрр: сĕрлесе çитрĕ сĕтел шăни. Ађт.

Нăй—нăй—й!... Вăси-шăни те йанкăлтаттарса стсенă çине тухрĕ. Тенăрлах йурлаť.

— Пăн-пан! тутарђĕ тислĕк шăни паспала.

———

Контсерт пуçланђĕ. Полни хор. Кворăм çитнĕ.

Кўме çине тăнă пекех, халапلансах йурлаççĕ.

Камăн хăлхасем витĕр,—
Йурланине итлĕр!

———

Ни-ни-й! Епĕ кĕçĕнни!
Атăл хĕрринђи, ревиçи çынни...

Ĕмĕр ман кĕске,
Çапах та, тĕнђе!...
Кунта пурăнма
Питех те аван.

Кацхине кăшт-кашт ђĕпĕткелетпĕр, ђĕр йун ĕметпĕр. Мусăк сассипе ĕçкĕ

ĕçетпĕр. Унтан ирҫҫенех „сӳсне тĕветпĕр“. Ташă çине ташă. Туй çине туй...

Шупашкар оркесттăрĕ пекех никама вĕрентĕмĕр.

Пирĕнпе пĕрлех, ӳпресемпеле, Комунхосĕ те хытă савăнаҫ.

Песплатнах, йалан, каçпа пуçласа кăнтăр кунҫҫенех—12 çехетҫен пире параҫ çутă.

Çутти хĕвел пек. Мусăк çийĕнҫех...

Пур-пур татах та ҫиттаҫнă çинҫи.

Ик çĕрте çунаҫ икĕ лампăҫкă, ик лампăҫки те електритсăллă...

———

— Ну-ну! терĕм епĕ хамăн ăшра. Пĕрре йанлаттарса йарсассăн, лампăҫку мĕнӳ пĕтĕмпе ывтăнса кайăн. Çынсем хула илемшĕн. Микула укутнĕк умĕнҫилле, ĕмĕрте сӳнми çутă тăвасшăн. Есĕ пур никаса çӳретĕн... Решим та решим, еккономи!...

Тăхăнтаратăп пĕрре, çăва йупи!...

— Нĕр-нĕр-р!—Нĕр. Аҫттă пуçларĕ. Унăн пурнăçĕ тата лайăхрах.

Епĕ пурнап, тет, пивнойра—мĕнре, Совпартшколсенҫе. Кунĕнçĕрĕннех унта çимĕç пур. Пирĕн йыш пысăккă пĕр пин штук пулĕ унта пурнатпăр, кăлпассипелех мăнтăрланатпăр...

Унти пурăнăç ытти çĕртинҫен пирĕншĕн аванрах.

Емелсем-мĕнсем, капкăн тыткăçсем лартса хумаççĕ.

Варвитти ҫиршĕн каççах кайатпăр. Хăшпĕр аҫине, урараи ӳкмех, емел паратпăр. Хăшĕсем авă 3-шер 4-шар кун, тухтăрне кĕтсе йăшса выртаççĕ...

— Пăн-пан!... Маншăн ку аван. Ман ваҫҫи какай...

— Нĕр-нĕр! хама та аван, кăлпассипеле ĕнтĕ йăлăхнă. Ҫĕр какай çине куçассăм килет...

———

Сĕтел шăни ҫарăнҫĕ. Ӳпри те хуллен çеç калаçаҫ.

Пуçларĕçĕ теприсем...

— Най-най!...

— Пăн-пан!...

Пĕри хăй ĕне çинҫе пурăнса унăн çурăмне хăпартса пĕтĕрнипе мухтанаҫ. Кĕçĕрхи çĕр Атăл хĕрĕнҫе Куркăпа çĕр каçнине асăнҫĕ. Ах çав Купанов хуçан (ăна ҫăвашла „Тута“ нăв тесҫĕ!) тути таҫка пулас. Çавăн çине ларса пăхасҫĕ, текелесе илет.

— Тĕлĕнмелле, уйхирĕнҫе ĕнесем хӳреллĕ-çапкаланса пĕтереççĕ. Кунта, Шупашкарта, хĕрарăмĕсем... Самана тесе, шалт телĕнсе кайнă васи шăни.

Ик йенҫе ик хӳре—те çунат, те хӳре? Йупкисем çунатланса пыраççĕ. Вейăр пек... ик йенне иккĕ. Варкăштараççĕ, сивĕтсе пымалли пулас...

— Ларса пăхас-ха çапах... ĕмĕтĕм ӳсет.

———

— Ӳссе ӳсмесĕр! Пăн-пан! тислĕк шăни те савăнаҫ.

— Епĕ, тет, кĕçĕр Опоно склатĕнҫе çĕр каçрăм...

Унта Ашмарин çинтакçисĕсем таҫкаланса кайнă. Выртса тăма та аван.

— Епĕ кĕт-кĕт ăна пасара тухаҫи, тесе--халĕ те çук. Ĕнтĕ патне йăва çавăрам çĕрсе пĕтиҫҫен!...

———

Орккестăр çĕмĕрттерет кăна. Прокрами пысăккă.

Шур çăкăр çитменни çинҫен. Шултра çынсем пек çиме май пулманни çинҫен...

— Сатту, теççĕ, халĕ ӳсĕррисем ытларах хăсса параççĕ. Пасар варнех...

— Ай-йай шăлçеммиçке, ҫăмласах панă!...

Ку çимĕç хыççăн торковккăсен çырли çинех тула тухас килмерĕ.

Шырама ҫупрăм. Анҫах, телей çук: леш, ваттăр текенни пасартан çĕтнĕ.

Аптриш та аптрал.

Аптрал та аптриш!..

— Контсерт! Контсерт! Контсерт ку вăйлă.

Пайанхипе çеç вăлă пĕтмест-ха. Итлес текен—хытах итле! Туҫккă шăнасене çех ан питле!...

Пĕтрĕ ку №-р.

Санăвĕс анаҫ. Çыраканни те вăранаҫ. Ваçанкка.

## Пĕре вĕреннĕскер.

Хулари копператтивра пĕр улпутла тумланнă арçын çăмарта илет. Прикашҫăкĕпе çапла калаçса тăраççĕ:

— Ак, пит лайăх çăмарта! Иртнĕ ернере тунăскер.

— Каллех хаҫхи. Мана киввине пар, тавар хакĕсене йӳнетеҫҫен тунине.

# Ретаксийе йанă çыру.

Ретакси йулташ!

Манăн Винттă йатлă кўршĕ сирĕн пата, епĕ Мăнкун ţухне хуţеме карţăка хĕнени çинţен çыру çырма хатĕрленет. Анţах есĕр, йулташсем, ăна ан ĕненĕр, мĕншĕн тесен суйаť вăл.

Епĕ вăл ĕç çинţен тĕпĕ-йĕрĕпех каласа пама пултаратăп.

Ретакси йулташсем!

Манăн хунеми Шăхлиţă Петĕр Мархви—революţутсийе хырĕç пыраканскер. Ун пек революţутсийе хирĕç пыраканни Совет Сойусĕнţе те çук.

Ку пĕр йапала.

Манăн арăм Марине ун майлă.

Ку тепĕр йапала.

Аţасем манăн—Микулай, Кришка, тата Марйе—вĕсем майлă.

Ку виçĕмĕш йапала.

Епĕ пĕрех хут мар хунемене каланă:

— Есĕ, Петĕр Марфи, пăрах-ха çав тĕн майлă акитатси тума. Епĕ тĕппипех пĕлетĕп—турă çук, çĕр çаврăнаť, хĕвелĕ вырăнтах тăраť—ниçта та кусмасť тенĕ.

Вăл мана:

— Шуйттанла калаçатăн есĕ, тет.

Арăмăм та ун майлă.

Аţамсем вĕсем хыççăн кайаççĕ.

— Ну, терĕм, есĕр апла пулсассăн, сирĕнтен епĕ уйăрлатăп, çире ваţţи урăх вырăн касса паратăп. Ак ку ман çтена пултăр, ку сирĕн çтена. Кунта епĕ вошťсен сăнĕсене çакатăп, есĕр унта турă таврашсен сăнĕсене çакăр. Манăн Совет çĕршывне хăварăн тĕнлĕ сăмсусемпе пырса ан та тĕртĕнĕр терĕм.

Уйăрлтăмăр.

Манăн çĕршывра—Ленинпа Кокăţ сăнĕсем çакăнса тăраççĕ, вĕсен—çăлакан турă, турă амĕшĕ, тата Микула ухутник сăнĕсем.

Вĕсем хăйсен тĕнлĕ çĕршывĕнţе латăн шăрши кăлараççĕ, пуççапаççĕ.

Епĕ хамăн Совет çĕршывĕнţе ţĕлĕм паклаттарап, „Интернатсионал“ йурлатăп.

Ретакси йулташ!

Винтă ман çинţен çырас тенĕ йапала вăл Мăнкун умĕн пулнă.

Вăл тĕрĕс ĕнтĕ.

Ăна хирĕç каласса тăмастăп.

Карăм епĕ халăх çуртне.

Каймасан та йурамалла мар,—вĕт, епĕ турă çуккине пĕлетĕп, çĕрĕ çаврăнаť, хĕвелĕ пĕр вырăнтах тăраť.

Таврăнтăм киле çурçĕр иртсен.

Алăк сулли урлă каçрăм та тĕлĕнсе хытсах карăм.

Ретакси йулташ!

Калама та йăвăр ун çинţен.

Епĕ турă çуккине, çĕр çаврăннине, хĕвел пĕр вырăнтах тăнине пĕлетĕп пулсан, мĕншĕн тата манăн Совет çĕршывĕнţе çурта çутса лартнă.

Ăвăс çуртасем.

Ретакси йулташ!

Мошĕт епĕ ун ţухне хĕрсе кайнă пуţ, çилленсех çитрĕм.

Хунемене аллинţен çаврса илтĕм те, хамăн Совет çĕршывĕнţен утăнтар-

## Алимент



**кăсйене те анаť, ĕнсе çине те улăхса лараť.**

# Хут мурӗ
## йе
## хӑҫан шаљђи тулӗши?




**Тулатех пулмалла.**

са йатӑм, ун хыҫҫӑн ҫуртисем те утӑнса карӗҫ.

— Ан пыр, кивӗ турђӑка, манӑн Совет ҫӗршывне, вӗлеретӗп, тетӗп.

Пӑхса тӑракан арӑмӑм мана:

— Ухмаха йертӗни мӗн! Ыран, вӗт, Мӑнкун, тет.

Епӗ ӑна:

— Вӗҫтере пар шуйттансем патне, тетӗп. Епӗ лайӑх пӗлетӗп—турӑ ҫук, ҫӗр ҫаврӑнаў, хӗвел вырӑнтах тӑраў. Есӗр тата манӑн Совет ҫӗршывне йышӑннӑ.

Хунеме йӗрет, арӑм макӑраў, ађамсем ҫухӑраҫҫӗ, йатӑ вӗрет.

Ҫаб вӑхӑтра кӳршӗ ҫынни, хайхи Винттӑ, ман ҫинђен ҫырас текенни пырса кӗрет те:

— Христос ђӗрӗлнӗ, тет.

Ретакси йулташ!

Каласа парӑрха есӗр—ђӑтма пултарни епӗ ку мӑшкӑла.

Кирек-мӗн калӑр та, епӗ ђӑтайма рӑм.

Епӗ Винтта пилӗкӗнђен йарса илтӗм те, унӑн пуҫӗпе пӳрт алӑкне уҫрӑм.

— Ак сана, тетӗп, ђӑн ђӗрӗлнӗ.

Алӑка питӗрсе илтӗм.

Ӗҫӗ те ҫав анђах.

Винттӑн сӑмси хӑпарса ђухнӑ.

Вӑл, паллах ӗнтӗ, ман ҫийе ҫилленнӗ те, вӑл ӗҫ ҫинђен хаҫат урлӑ Пӗтӗм Сийусӗпех пӗлтересшӗн.

Анђах епӗ пӗтӗм тӗнђипех калатӑп:

Никама та епӗ хӗнемен.

Ҫӗр ҫаврӑнаў.

Хӗвелӗ пӗр вырӑнтах тӑраў.

Винттӑ суйаў.

**Турӑсӑр Иван.**

Елӗкхи ман йат: **Пупни Иван.**

Ҫырса илнӗ **Анттошӑ Ко.**




## Хĕвел сӳниђђен пулатех.

Америкре 65 хутлă ҫуртсене пĕр самантрах туса пĕтереҫҫĕ, пирĕн ђăваш респуплĕкĕнђе апла мар.

Ентрийел вулĕҫтăвкомĕ 1925-мĕш ҫулта ҫуннă мунђа вырăнне ҫĕнĕ мунђа тума пуҫлани ҫулталăк иртрĕ, анђах халĕ те туса пĕтереймен. Тума пуҫланă мунђи ҫăмăр ҫинђе ларса туса пĕтериђђенех ҫĕрсе пыраҭ. Ăҫташи вулĕҫтăвкомăн тирпейлĕх решимĕ?—тет Кайпулккă корреспонтент.

Ђăнах та: ăҫтаха вĕсен тирпейлĕх решимĕ? Вулĕҫтăвком претҫетаттĕлĕн портфĕлĕ ăшĕнђе пули анђах. Шыраса пăхăрха.

## Йалсовет хуликан майлă.

Ҫĕпĕрти Ениҫейск кĕпĕрнинђен ҫыраҫҫĕ:

Пирĕн Ҫӳлти-Итет йалĕнђе (Пирилӳс районĕ) Ҫĕрпӳ уйесĕнђен килнĕ Нестĕр ывăлĕ Ваҫҫа хăй арăмĕн аллине тимĕр сенĕкпе ҫапса хуҫнă. Йалсовет хĕрарăм майлă пулмарĕ, хуликан майлах ҫаптараҭ, тет.

Сирĕн йалсовет хăй те хуликан ăрăвĕнђен пулĕ. Метрĕккă кĕнеки тăрăх тĕрĕслесе пăхăрха, хуликан ăрăвĕнђен пулсан ăна ун пирки справккă памалла.

## Арăм улшуҫи.

Пĕр ҫын ăратлă вăкăр умне тăнă, тет те, ҫапла калаҭ тет:

— Ех, вăкăр, вăкăр! Аван сана пурăнма. Санăн арăмусем ҫулталăкра 40—50 арăма ҫитеҫҫĕ, анђах алиментне тӳлеттермеҫҫĕ сана тесе, калаҭ, тет.

Ђăваш-Сурăм вулăсĕнђи Тури-Пантлире пурнакан Макар Йермин те апла каламалла ан пултăр.

„Вăл ҫак ҫура 4 хĕрарăм илсе арăм туса кăларса йађĕ. Пĕрине те йапалисене кайалла паман“. (Йалҫынни).

Ма параҭ вăл? Кайран алимент тӳлеме пурлăх кирлĕ пулаҭҫке. Арăмсен йапалисене сутса алимент тӳлесшĕн. Ђейе ҫынăн куҫĕ саккăр сăваҭ тесе Йерми ҫинђенех каланă пуђ ваттисем.

## Карттин ҫыракансем.

Кĕҫĕн-Йелђĕк вулăсĕнђен ҫыраҫҫĕ:

Кивĕ-Ейпеҫре Йакку Михалипе Сăран ађи камăн хĕр пур, ҫавăн хапхине тикĕтпе сăрлаҫҫĕ. Пĕре ҫапла тăвата ҫынăн хапхине тикĕтпе сăрласа тухнă. Ма ђарăнмаҫҫĕши вĕсем, тет Ăнкăлтăк.

Ăҫтан ђарăнаҫҫĕ вĕсем тикĕте йуратаканскерсем. Пуҫ мими вырăнĕнђе те вĕсен тикĕт пулмалла та, тикĕтрен уйăрлаймаҫҫĕ ҫав. Шăпи вĕсен ҫавăн пек пуђ. Тĕрме хăй йенелле туртаҭ вĕсене.

## Халăх хушшинђе ĕҫлекен комсомолĕс.

„Ҫамрăк Хресђен“ хаҫат ҫинђе комсомолĕссен выртмари ађасем хушшинђе ĕҫлесси ҫинђен ҫыраҫҫĕ. Вăл канаша комсомолĕссем кашни хăй майлă пурнăҫа кĕртме тăрăшаҭ.

Шакăл (Тукаш вул.) ҫыннисем ватти-вĕттипех выртмара картла выђаҫҫĕ. Выђаҫҫĕ те, пĕрпĕрне ҫӳҫрен тăпăлтараҫҫĕ. Ку карт вăйине комсомолĕс Йакур Митрийĕ сараҭ. Карђĕ те йалĕпе унăн ҫеҫ. Ку вăйă ҫине комсомол йађейккин ҫаврăнса пăхмалла, тет пĕри.

Ма ҫаврăнса пăхас? Комсомолĕс картла выђани ҫаврăнмасăрах курăнаҭҫке. Ҫаврăнасђĕ те,—анђах ҫаврăнса пăхсан пуҫ ҫаврăнасран хăраҭ пуђ йађейккă.

## 57 çулхи çамрăк аҫа.

Хаҫхи тухтăрсем вата çынсене çамрăклатма пултараççĕ. Те тухтăрсем пулăшнипе Çĕрпӳре çакăн пек ĕç пулса иртнĕ:

Çĕрпӳри хула копперативĕнҫе, профсойуспа тунă токăвăр тăрăх, çамрăк аҫасене, пĕрик аҫана, сутуилӳ ĕçне вĕрентмелле (вырăсла ăна „проҫă потростков“ теççĕ). Çамрăксен вырăнне çав копперативра 57 çулхи старика йышăнтарнă.

Емел çисе çамрăкланнă çын пуҫ вăл. Копперативв пуçлăхĕ те емел çинĕ пулмалла--ватăпа çамрăка уйăраймаст̆. Пуçĕ пурши унăн, йе кĕлетки анҫах?...

## Насуса тӳрлетмеççĕ.

Пушкăрт респуплĕкĕнҫен çыраççĕ:

1926-мĕш çулта Пӳшпӳлек йалсовеҫĕ (Пелепей канттонĕ) ваннă пушар насусне Пелепей хулине пушарнăй ушкăна тӳрлеттерме панăҫҫĕ. Кайса панăранпа 409 кун иртрĕ. Насус çук, теççĕ.

Пелепейри пушарнăй ушкăн çывăрат̆ пуҫ. Пушар насусне тытса ун çинелле çирпĕтсен вăранмĕши?

## Пуçа кĕнĕ шухăшсем.

Ҫăваш респуплĕкĕнҫи Çĕнйал йатлă йалсем нумай та, анҫах хăш-пĕрисене Кивĕ-йал тесен те пымалла.

---

Хăш йалти пионерсемпе çамрăксем, ҫетвĕрт умĕнҫе тăракан йаҫейккă çекреттарĕ хыçĕнҫе тăнă пирки тĕттĕмрен çутта тухаймаççĕ.

---

Хаçат-кĕнеке çутти малалла туртат̆, çут ҫетвĕртри çутти кайалла туртат̆.

---

Копперативĕ пулсан, растратҫĕкĕсем хăйсемех тупăнса пыраççĕ.

---

Пĕрисем гирпейлĕх решимĕшĕн тăраççĕ, теприсем решимшăн лараççĕ.

---

Ан ӳркен—комантировккăсене нумайрах çӳре, ларассине кайран та ларăн.

---

Кĕнҫелерте ĕçлекенсем отпуска кайса пĕтсессĕн, кĕнҫелерти волоккиттă та сахалланат̆.

---

Ратио тусĕ пулаҫҫен, пуçлăх тусĕ пулсан усăллăрах.

# Шыва кĕнĕ вăхăтра.

Иалсенҫе путса вилекен аҫасем нумайланҫĕç.



— **Килйыш пысăк-и санăн? Аҫа миçе?**

— **Хаҫ кăна шыва кĕме карĕç те, миçе аҫине тĕрĕссипе калама пултараймастăп. Шыва кĕрсе килсен калама пултаратăп.**

# Упа кĕтессисенҫе.

(Йалсоветҫĕсем тăрăх).

## «Решимнăй» претҫетаттĕл.

А. Иванов тирпейлĕх решимне пит ăста вырăна кĕртет. Вăл та пĕлмесен, кам пĕлтĕр тата?! Ахалрен суйламан ҫав ăна Йĕкĕрвар хресҫенĕсем (Ҫĕрпӳ у.) йалсовет претҫетаттĕлне! А. Ивановăн пуҫ, увăн пуҫĕ йероплан мотторĕ пек ĕҫлет! Тирпейлĕх решимĕ ăна ним те мар.

Калăпăр сана йалсоветĕнҫен ĕнентерӳ илмелле. Пыратăн ун патне. Ҫапла-ҫапла ĕнентерӳ кирлĕ, тетĕн. Пошалстă парха, Иванҫҫă, тетĕн. Иванҫҫă тытса тăмасť. Йăпăр-йапăр кăсийинҫен пиҫҫет туртса кăлараť те—йăпăлт! ҫуласа илет те ҫамка ҫине-шарт! пиҫҫет пусса хураť. Тĕлĕнсе хытса кайнă ҫын: Иванҫҫă, мĕн пулҫĕха ку йапала? тет. Лешĕ: Тирпейлĕх решимĕ тăвап. Капла тусан, хут та кирлĕ мар, тет. Ененгерӳ ыйтма пынă ҫын кайаť вара ҫаврăнса...

А. Иванов ăслă. А. Иванов пĕлет тирпейлĕх решимне. Йăпăлт! ҫуласа ил те ҫамка ҫумне пиҫҫетне шарт! ҫап. Решим пулҫĕ те... Мĕн кирлĕ тата Иванова?

## Ĕҫсене ҫыхнă, пĕрпĕрне пулăшу пур.

Кĕҫĕн Шетмĕре (Упи в.) санкомиҫҫи ҫăл тасатнă. Иртен пуҫласа касҫенех витре-витре ҫăлран йушкăн кăларнă. Поҫҫатнăй ĕҫ ĕнтĕ, ĕҫле-ĕҫле санкомиҫҫи ывăннă. Ывăнмасăр, санкомиҫҫи выҫăхим?!

— Ывăннă хыҫҫăн мĕн тăваҫҫĕха?

— Ывăннă хыҫҫăн ҫуттине сыпаҫҫĕ...

Ăҫтан тупас ҫуттине? Сахар маткин пур та, анҫах укҫасăр памасť.

Сиксе тухаť кунта претҫетаттăл Миххайлăв.

— Есĕр пăртак тăрăрха, епĕ шивым манерăм илсе килĕп, тет.

Санкомиҫҫи кĕтет.

Хайхи пирĕн Миххайлăв хăйĕн кĕнҫелерне кайаť те, теҫетниксене ҫĕнсе, вĕсене йал тăрăх ҫăмарта пухма йараť. «Самопоклошени» тесе каласа ҫӳрĕр, тет.

Теҫетниксем ҫасах ҫуттине илмелĕх укҫа пухаҫҫĕ.

Санкомиҫҫи ĕҫет. Вĕсемпе пĕрле Миххайлăв та йурра шăрантараť ҫеҫ!

Мĕн куҫанмалли пур. Санкомиҫҫи ĕҫлет, претҫетаттăл пулăшаť. «Полная увязка» темелле.

## Асту, «Маклĕртан» ан йул!

«Выше пупа не прыгнешь», теҫҫĕ вырăссем. Ҫăвашла каласан ку сăмахсем: Кăвапаран ҫӳлерех сикейместĕн, тени пулаť.

Мăн Вылари (Аттай в.) ревиҫи комиҫҫи претсетаттĕлĕ Шорин йулташ халăхран икĕ ана илнĕ те укҫине тӳлемест.—Укҫа памастăп, епĕ ревкомиҫҫи, йалта манран асли те ҫук, ҫавăнпа сире ак укҫа, тесе ҫăмăрне кăтартаť укҫа ыйтакансене.

Йалкор ҫакăн ҫинҫен ретаксине ҫыру ҫыраť. Так и так, протташҫитте, тет.

Ех, йалкор! Мĕн ăна «протташҫит» тумалли пур. Шорин—маттур. Ăна кăвапаран ҫӳлерех сикейменшĕн ҫеҫ пăртак «протташҫит» тумалла. Мĕншен-ха вăл халăхран пĕр 25 теҫеттин илмен? Пурĕ пĕрех: йалта пĕр асли, укҫине тӳлемелле мар.

Ей, Шорин! Кăвапунтан ҫӳлерех сикме пултаратăни? Ав ҫирĕн йалти «Маклĕр» пултараť, теҫҫĕ. Асту, «Маклĕртан» ан йул.

Х.

Сентăпĕр уйăхĕнҫе „Капкăн“ шурналăн

**АҪА-ПĂҪА НОМĔРĔ**

тухаť. Аҫасем, тыҫă вырнăшăн аҫусене хăвăра валҫи „Капкăн“ ҫыраттарса илтерĕр!

# Мĕн пулсан мĕн пулассине сăнани.

Çанталăка сăнакансем выҫăх-ҫĕрлĕх мĕнле тăнинҫен те мĕнле çанталăк пулассине пĕлме пултараççĕ. Ѥлĕр тата тĕрлĕрен етемсем мĕнле хăтланни тăрăх, пулас ĕçсем çинҫен малтанах каласа хума пултаратпăр. Пирĕн сăнавсем çаксем:

**Çамрăксен** куçĕсем хĕрелме пуçласан—присыв пулас вăхăт çитет.

**Халăх** пушар хатĕрĕсене йусасси çинҫен постановлени йышăнсан—вăл йалта ĕнер анҫах пушар пулнине пĕлтерет.

**Иалта çăмарта сутакансем** сахаллансан — мишавайсем килессе.

**Прикашҫăк** пуçне усса ларсан—копперattив лавкки çунса кайасса.

**Саниттар комиçҫинҫе** тăракан çын шурă кĕпе тăхăнсан — йала тухтăр килессе.

**Усламçă** тирпейлĕх решимĕшĕн тăрăшма пуçласан— тараса пуканĕсем (кирĕсем) йакаласса.

**Арăмĕ** телекатка суйлансан—упăшки хĕнессе.

**Арăму** йăпатма пуçласан—тутăр илтерессе.

**Упăшки** арăмĕ пуçĕнҫе кăвак çўç пĕрҫи тупсан—арăмĕпе уйăрласса.

Пухура çĕр виçесси çинҫен калаçсан —çапăçу пуласса.

**Иалкора** хирĕç сăмах ҫĕнсен— сан çинҫен хаçатра саметкă тухасса.

**Ҫемперлен** нотă çырсан — Совет Сойусĕнҫе йеропплансем нумайланасса.

**Иалсовет прĕтçетаттĕлĕ** урă çўресен—виçĕ кунтан перевыпăр пуласса.

**Ĕçлекен** шалу илсен—ĕçмелли тупаĭ вăл.

**Машинисткă** киле кайсан—3 сехет çурă çитнине пĕлтерет (санаĭĭи пĕтерме вăхăт.)

**Претçетаттĕл** маҫҫа çинелле пăхма пуçласан—отҫот çырасса.

**Кĕнҫелерте ĕçлекен** тăрăшса ĕçлеме тытăнсан—наҫҫалнĕк кĕрессе.

**Командировккăран** таврăннă çын сулахай аллине руҫкă тытсан— сҫот çырасса.

**Хваттер хуçи** кирлĕ мар çĕртех çыпçăнма пуçласан — хваттер хакĕ хăпарасса.

**Уҫрештенири** штатсене ҫакарсан— тепĕр уйăхран штат хушăнаĭ.

**Слушăшҫисем** саҫатти пĕтиҫҫенех ĕçлесен—пайан шалу параççĕ.

**Уçламçă** çĕтĕк кĕпе-йĕм тăхăнсан —налок тўлеме кайасса.

ИĂВАН—МУҪИ.

---

# Йўнетмелли тавар.



— Ай-ай, шăршă перет санран!— Санпа йунашар çакăнса тăма та киҫем. Паллах ĕнтĕ—санăн хакна ыранах йўнетеççĕ пуҫ.

# ÇĂХАН.

(Йуптару).

Выç анканă пĕр çăхан
Хыпар илтнĕ вăл таçтан—
Унта, хресҫен клетĕнҫе
Çĕнĕ пурнăç, çĕн тĕнҫе:

Хырăм выçсан—çимелли,
Ĕçес килсен—ĕçмелли,
Выҫҫамалли, кулмалли,
Вăхăҫĕпе—канмалли.

— Ех ырăçке, ырăçке,
Ман ĕмĕтре çĕн ĕçкĕ!—
Тесе сăмах хуҫĕ те
Вĕçтерҫĕ çав кĕлете.

Катаранах мăн кĕлет
Ҫаплă çуртăн курăнаť;
Çăханăн та выç ĕмĕт
Çитмесĕрех тулхăраť...

Çитнĕ-çитмен кĕлетре
Урлă-пирлĕ пăхкалаť,
Ăна кирли нимĕн те
Шыраса та курăнмасť.

Шăрҫĕпеле тыррине
Кĕлеҫĕпе салатрĕ,
Ĕмĕтĕнҫе пуррине
Курмасăрах çухатрĕ.

— Ех ти, шелмă çыннисем,
Мана ахаҫ çул турĕç;
Хайсенĕн те ҫăххисем
Манран ырă кураймĕç!...

Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтне
Сурҫăкĕпе çăтрĕ те.
Ик çунатне харс çаса
Тухса вĕçрĕ кĕлетрен.

* * *

Ан çилленĕр, йулташсем,
Пирĕн хамăр хушăрта,
Çăхан пекех выçлăхсем
Нумай та мар—сахал мар.

Пĕҫĕк, ырă йапала
Вĕсемшĕн вăл нимĕн мар,—
Тавай ăна пысăкки,
Пысăкки те лайăххи.

Ç. Шăпҫăк.



# Кĕлте çинҫе.



Ы в ă л ĕ.—Ай!... Тур пулăшнипе пайан аранах кĕлте кӳрсе пĕтертĕм.

А ш ш ĕ.—Аҫам, çав Йаранарти кĕлтене илсе килменҫĕ вĕтха есĕ. Илсе килсем, ывăлăм, ҫасрах. Атту выҫăхсем ватса пĕтерĕç.

Ы в ă л ĕ.— Вăл кĕлтесене выҫăх ватаçран ан хăра, атте. Вĕсене виçĕм кунах Йаманакри Усăп Матрĕнĕ алиментшăн турттарса карĕ.

П. В.

---

# Сисмен инкек.

**Хресҫен**: Ай, турă! Пĕтрĕмĕрех пуп çурҫĕ çунаť. Сӯнтерес пулаť.

**Пуп**: Ăна сӯнтерме йурамасť. Пупа вăл çуртра усраманшăн çурта турă хăй тĕртсе йанă.

**Хресҫен**: Кам тĕртсе йанă, тетĕн. Персе вĕлерес пулаť ăна.

**Пуп**: Турă тĕртсе йанă, тетĕп.

**Хресҫен**: А-а?!...

К и р й а к к ă в.

---

## Акара.

— Сӯре сӯреха, Петĕр!

— Ватăлтăм. Куç курмасť çав.

— Таçта çав машшин сасси илтĕнет? Инçетре пулмалла.

— Ав пыраť. Ăна та курăймастăни? Йероплан вăл.

К а х х о в с к и.

## Йунланă хăна.



— Туйра лайăх хăналарĕçи?
— Пит лайăх хăналарĕç. Пуçран йун килиҫҫенех хăналарĕç.
— Аван еппин.

### Салтака кайнă ҫух.

Упăшки. Ма йĕрен арăм? Епĕ çиҫҫас килĕп салтакран.

Арăмĕ. Салтакран ҫас тавăрăнатăп, тетĕн те.

Кахховски.

### Атăл хĕринҫе.

— Пăх-ха, мĕнле çÿллĕ çыран ишĕлсе аннă.

— Паллах ĕнтĕ хаҫхи технĕксем тунăскер пулмалла.

### Пур инкек те çавăнтан.

— Ах, шуйттан! Кушак çул урлă каçса карĕ.

— Есĕ тĕшмĕшлĕ çын иккен.

— Тĕшмĕшрен мар. Кушак хыççăн тампă çулне çĕнĕрен йусамалла пуласран хăратăп.

## Турă пулăшнипе...

Пирĕн (Йăлăм-Кас в.) Антрей Иерусланăв теҫук, Сывлăх Комиссариаҫĕ урлă, санатторине сывалма карĕ.
Х. Хăва.

Таçтан, муртан
Çавра çилпе—
Шупашкартан
Комиççипе
Санатторине:

Турă çынни
Ентри теҫук,
Пĕр хĕресҫен
Сăнĕ те çук
Килнĕ имленме.

Йăпăлтатса
Çÿренипе
Вăтанмасăр
Йăлăннипе—
Лекнĕ, шеремет.

Ĕçхалăхĕн
Тутлă йунне,
Санатторин
Пылак мулне
Ĕмет, хĕрхенмест...

Çав теҫука
Унта кайма,
Ăçти çука
Ҫăн сывалма
Кам хут панăши?

Унăн пуçне
Çăра тĕтĕм,
Çутă куçне
Хурçă перу
Çитсе кĕмĕши?!

Ç. Шăпҫăк.

## Мускаври арăмсем.

— Есĕ ыран Мускавран арăму килет терĕн... Мĕнле санăн арăму—-илемли... çÿçĕсем мĕн тĕслĕ?

— Тахăшĕ килет çке... Сарри килсен--сарă çÿçлĕ, хури--хура çÿçлĕ, çÿренни—çÿрен çÿçлĕ. П. В.

# „ĔÇ КЕРОЙĔ“

Акă Сĕнтĕр-Вăрри вулăсĕнҫи Коновалăвă вырăсĕ В. А. Шикалевский ĕç керойĕ шутне кĕнĕ.

Мĕнле майпа, тейĕр. Вăл çак токкументсенҫен лайăх курнаť:

**Удостоверение.**

Выдано гр. М.-Посадской, Ч.А.О. Виктору Александровичу Шигалевскому в том, что он до Февральской Революции состоял на службе в штате служащих, Чебоксарского Полицейского Управления....

29 Авг. 1923 г. **№ 3264.**

Çак утостоверенийе кура, ăна хĕпĕртесе, хапăл тусах Шупашкар уĕçтăвкомĕпе уйесри Партти Комиттеҫĕ тата Упрохсовет пĕрле пулнă ҫаплă саççетанийĕнҫе (1923 çулта нойапĕрĕн 12-мĕшĕнҫе) ĕç керойесен ҫислă çписки çине кўртсе хураççĕ.

Утмă л—Турат.

**Капкăнран:** Политсисен натçираттĕлĕ пулнă ҫухнех Шикаҫова ĕç керойĕ йатне илттермелеҫҫĕ. Ĕççыннисен пусĕсене çапса шăтарнă ҫухне вăл пит керой пулнă, теççĕ. Керойсене истори тăваť тени тĕрĕс мар, вĕсене ҫаплă саççетанисенҫе тăваççĕ.

## Çўç кастарнă хыççăн.

Шупашкарти çўç - касакан Тоťанăв, хăй пĕр майах ўсĕр пирки, çўçсене йакатса йарас вырăнне, пăсса йараť.

(Кор. çырăвĕ).



— Çўç кастартăм. Çпетсиалиса кастартăм. Тоťанăв касрĕ.

— Епĕ хуҫама карҫăкна кастарнă пуҫ тесе, пит аван каснă та.

## «Капкăн» хыпарĕсем.

**Тĕлĕнмелле йапала.** Виç-çырмари çĕр упполномоҫăнĕ Иванов ерех ĕçме пăрахнă. Мĕншĕн пăрахни çинҫен ыйтсан, вăл пирĕн сотрутнĕке çапла каланă: çĕр упполномоҫăнĕнҫен тухмалла пулнăран пăрахрăм, тенĕ. Ку ĕç пирки тоснанисем тумаççĕ.

**Ырă кăмăллă претçетаттĕл.** Çĕнйал-Шетмĕ (Ҫăваш-Сурăм вул.) йалсовет претçетаттĕлĕ йалти çамрăк аҫасем ыйту ыйтма пырсан, ҫышкă парса йараť.

**Шалусăр ĕçлекен.** Шупашкарта ҫиркў çумĕнҫен иртсе кайакан урамра пурнакан Иванов Ваççили кунĕнçĕрĕн ирĕклĕ ушкăнсенҫе ĕçлеме пуçларĕ. Тĕрĕслесе пăхман хыпарсем пĕлтернĕ тăрăх, унăн кăçал приома кĕмелле (салтака кайма çул çитнĕ) тет.

**Пĕтерпĕ!... Пĕтернĕ!...** Вунпĕр-Така йалĕнҫи Упрам Çеркейĕ „Капкăнăн“ 15-мĕш нумĕрне пĕре тытсан пĕтĕмпех вуласа пĕтернĕ. Ку ĕç пирки каллех таснани пулмасť.

**Мăн шăмă тупнă.** Шупашкар пуҫнитсинҫен тăвалла ларакан Ҫерныш-шов çырминҫе мăн шăмă тупнă. Вĕреннĕ çынсен шухăшĕпе, вăл шăмă çĕр ыйтăвĕ пирки çĕркомиççине пынă çынăн шăмми пулнă.

# Пуштă йешђĕкĕ.

**Романăв** П. Есĕ çыратăн:

Ђўлмек çўлли ађасем,
Шур сухаллă стариксем,
Ман анне те, ман йысна,
Йуратаççĕ „Капкăна“
Пурте ăна çырнаççĕ,
Каçса кайса кулаççĕ...

тетĕн. Суйатăн есĕ. Каçса кайса кулаççĕ пулин те, сан йыснупа аннў çырăнса илмен „Капкăна“.

**3 çулхи такана.** Хăш йал кĕтĕвĕнђи така есĕ? Атрĕсна кăтартман та, пĕлеймерĕмĕр.

**Крокотил, Темйан Петнăйа.** „Крокотилпа“ Темйан Петнăй Мускавра вĕсем. Есĕ самосвантсă.

**Ђемперлена.** (Шăмат вул.) Сана ответ „Канаш“ хаçатăн кашни нумĕрĕнђех парса тăраççĕ.

**Филиппăва.** Есĕ çыратăн: ку çырăва епĕ ĕçсĕр аптранă ђухне çыртăм. Кĕртĕрха ăна „Капкăна“, тетĕн. „Ĕçсĕр аптранă ђухне“... Кĕнђелерте слушит тăватăни мĕн есĕ?

**Ђăх-ђĕппине.** Ман „çтенкор“ пулас килет, тетĕн. Пирĕн „Капкăн“ çтена хаçађĕ мар, сĕтел çинђе выртмалли шурнал. Пулас килет пулсан пул. Ђармастпăр.




## „Капкăн“ йурри.

„Капкăн“ „Капкăн“ кап хыпаť,
Такама та çаклатаť,
Пур усала тасатаť,
Вара тытса култараť.

Илери те, вулари,
Ахăлтатса кулари?!
Ей, ну йара пар,
Йарапине пире пар,

Кайăк сасси — кулăм пур!..
Манран кайтăр мир çине;
Пĕр вунă пус укçу пур—
Кайтăр „Капкăн“ кантурне.

# Хаљхи мотăсем.

(Анатрипе тури).

**Ăшă шăрăхра.**



**Майралла урана тăхăнмалли.**



**Шалтан тăхăнмаллине тула.**



**Майралла ҫӳҫ турани.**



Ответ. редактор **А. Золотов**.

Чувашлит № 1974 Чебоксары, тип. „Чувашская Книга“.